ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ВЫРĂН ПЕЛТЕРЕШЛЕ ПУРТЕ УСĂ КУРАКАН АВТОМОБИЛЬ ÇУЛЕСЕНЕ ПРОЕКТЛАС, ТĂВАС, ЮСАСА ÇЕНЕТЕС ЕНЕПЕ ÇУЛ-ЙЕР ЕÇ-ХЕЛЕНЧИ ПОЛНОМОЧИСЕНЕ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МУНИЦИПАЛЛĂ ОКРУГЕСЕН ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНЕСЕМ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ ВЛАÇЕН ОРГАНЕСЕМ ХУШШИНЧЕ ÇЕНЕРЕН ПАЙЛАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2025 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Вырăн пелтерешлĕ пурте усă куракан автомобиль çулĕсене проектлас, тăвас, юсаса çĕнетес енĕпе çул-йĕр ĕç-хĕлĕнчи полномочисене Чăваш Республикин муниципаллă округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче çĕнĕрен пайласси çинчен" 2015 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 84 №-лĕ саккунне ("Республика" хаçат, 2016, кăрлач уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2020, раштав уйăхĕн 9-мĕшĕ; 2021, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) ятĕнче "муниципаллă округĕсен" сăмахсем хыççăн "тата хула округĕсен" сăмахсем хушса хурас;

2) 1 статьяра "муниципаллă округĕсен" сăмахсем хыççăн "тата хула округĕсен" сăмахсем хушса хурас;

3) 3 статьяна çакăн пек çырса хурас:

"3 статья. **Чăваш Республикин муниципаллă округĕсен тата хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен полномочийĕсене çĕнĕрен пайласси**

Чăваш Республикин çул-йĕр хуçалăхĕ енĕпе патшалăх политикине тытса пыракан, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ полномочи панă ĕç тăвакан органĕ (малалла – полномочиллĕ орган) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен çак полномочийĕсене пурнăçлать:

Чăваш Республикин муниципаллă округĕсен (малалла – муниципаллă округсем) çул-йĕр ĕç-хĕлĕнчи муниципаллă округ чиккисенче вырăн пĕлтерĕшлĕ пурте усă куракан автомобиль çулĕсене проектлас, тăвас, юсаса çĕнетес енĕпе пурнăçламалли полномочийĕсене;

Чăваш Республикин хула округĕсен (малалла – хула округĕсем) çул-йĕр ĕç-хĕлĕнчи хула округĕн чиккисенче вырăн пĕлтерĕшлĕ пурте усă куракан автомобиль çулĕсене проектлас, тăвас, юсаса çĕнетес енĕпе пурнăçламалли полномочийĕсене, çав ĕçсене пурнăçламалли хак 2 миллиард тенкĕрен ытларах пулсан.";

4) 5 статьяра:

а) 1-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"1. Çак Саккунăн 3 статйипе пăхса хăварнă полномочисене муниципаллă округсен тата хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче 2035 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕчченхи срока çĕнĕрен пайлаççĕ.";

ă) 3-мĕш пая "муниципаллă округсен" сăмахсем хыççăн "тата хула округĕсен" сăмахсем хушса хурас.

2 статья

1. Çак Саккун, çак Саккуна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрекен çак статьян 2-мĕш пайĕсĕр пуçне, 2026 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

2. Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем çак Саккуна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа Чăваш Республикин "Вырăн пĕлтерĕшлĕ пурте усă куракан автомобиль çулĕсене проектлас, тăвас, юсаса çĕнетес енĕпе çул-йĕр ĕç-хĕлĕнчи полномочисене Чăваш Республикин муниципаллă округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата Чăваш Республикин

патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче çĕнĕрен пайласси çинчен" 2015 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 84 №-лĕ саккунне (çак Саккунпа улшăнусем кĕртнĕ) пурнăçлама кирлĕ Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсене йышăнма пултараççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2025 çулхи ака уйăхĕн 29-мĕшĕ
20 №

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕ
Аппарат Председателя Кабинета Министров Чувашской Республики
Управление делопроизводства № 1